# Мускав ирĕкĕнчен килĕ

Раштав уйăхĕн 12-мĕшĕнче суйлавпа пĕрлех пĕтĕм халăх сасăлавĕ ирттерессĕ. Эсир Раççей Федерацийĕн Конституци проектне йышăнатăр-и?

Тӳрех калатăп, эпĕ проекта ырлама пултараймастăп. Акă мĕншĕн.

«Патшалăх влаçĕн Федераци органĕсемпе тытакан çыхăнусенче Раççей Федерацийĕн субъекчĕсем пĕр-пĕрин хушшинче пурте тан» тенĕ 5 статьяра. Килĕшместĕп çак йĕркесемпе. Чăваш, тутар е çармăс пек халăхсем вырăссенчен питĕ нумай кая юлнă. Кирек хăш енне илĕр — пур енĕпе те пысăк танмарлăх курăнать. Сахал йышлă халăхсем пирки вара калама та кирлĕ мар. Зĕсем вилес патнех çитнĕ. «Раççей Федерацийĕ пур халăхсен тăван чĕлхине сыхламалли, ăна вĕренмелли тата аталантармалли условисем туса хумалли правине шантарать» (68 статья) пулсан унашкал халăхсене, çав шутра чăваш халăхне те, федераци органĕсемпе тытакан çыхăнусем енĕпе çăмăллăхсем туса памалла. Унсăрăн хамăр культурăна, чĕлхене сыхласа хăвараймăн, майĕпен пурте вырăса тухса пĕтетпĕр.

Çавăнпа пирĕн пек халăхсене çăмăллăх парасси пирки ятарлă статьяра каламалла. «Кашни халăхăн иртнĕ тапхăрта патшалăх кӳнĕ сиеншĕн шыраса илмелли прави пур» тесе çырмалла. Федераци Пухăвĕнче асăннă йĕркесене пурнăçа кĕртмелли программа туса хатĕрлесе йышăнмалла. Ăна пурнăçлама Раççей правительствине хушмалла. Енчен те эпир федерацире пурăнатпăр пулсан унăн чăваш е пушкăрт ан пĕттĕр тесе тăрăшмаллах, вĕсене пурне те гаранти памалла. 69 статьяра «Раççей Федерацийĕ тĕнчери правăн пурте йышăннă принципĕсемпе тата нормисемпе, Раççей Федерацийĕн тĕнчери договорĕсемпе килĕшуллĕн сахал йышлă тĕп халăхсен прависене шантарать», тенĕ пулин те вĕсемпе мĕнле усă курмаллине уçăмлă каламан. Апла пулсан вăл хут çинче çеç юлĕ.

85 статьяна вулатăп: Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен ĕç тăвакан влаçĕн органĕсен акчĕсем Раççей Федерацийĕн Конституцине тата Федераци законĕсене.. (кунта хăш-пĕр йĕркесене кĕртмерĕм, ку статья пĕлтерĕшне улăштармасть) хирĕçленĕ чухне çав актсем вăйра тăрассине чарса лартмалли право пур. Çакă мĕне пĕлтерет-ха? Калăпăр, ЧР Аслă Совечĕ Чăваш Республикинче хими хĕç-пăшалĕ пĕтерекен объектсем тума йышăнманни çинчен ятарласа йышăну кăларчĕ. Çак статья вара Президента пирĕн йышăнăва пăрахăçлама ирĕк парать. Мĕншĕн тесен Аслă Совет йышăнăвĕ Федераци интересĕсене хирĕçлет. «Пирĕн суверенитет, çавăнпа хамăр мĕн йышăнатпăр — çав пулать», — теме пултараççĕ мана. Проектра республикăсем суверенлă патшалăхсем пулса тăраççĕ текен йĕркесем çук. Эпир малашне Мускав ирĕкĕнче пулăпăр.

Федераци бюджетне Чăваш ен уйăракан налук тытăмне те (75 статья) вăлах палăртать. Проектпа килĕшуллĕн пирĕн законсем Федераци законĕсене хирĕçлеме пултараймаççĕ. Çапла вара республикăн вăл е ку ыйтăва татса панă чухне Мускавпа калаçса татăлмалла. Вăл ирĕк памасан — нимĕн те тăваймастăн. Сăмахран, эпĕ çӳлерех çекленĕ чăваш халăхне аталантармалли программа йышăнас тесен те Мускава каймалла. Енчен те Мускава итлемесĕр ăна хирĕçле законсем кăларма тытăнсан, часах лăплантарма пултараççĕ. Президент хăйĕн ирĕкĕпе Федераци субъекчĕсенче чрезвычайлă лару-тăру туса хурать (88 статья).

Эпĕ асăннă статьясем Конституцие çаплипех кĕрсе каймa пултараççĕ. Çав ыйтăва наци-территорисенчен суйланнă депутатсен Федераци Пухăвĕнче çивĕч лартмалла. Мана депутата суйласан эпĕ çак ĕçе хастар хутшăнăп.

**Геннадий ВОЛКОВ,**
**Патшалăх Думине 33-мĕш суйлав округĕпе суйлама тăратнă кандидат.**